26-мĕш çул тухать: Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 3 ЮНКУН 50(6287) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХĂÇАЧĔ

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

МТС-сен тракторĕсене, комбайнĕсене тата ялхуçалăх машинисене 1943 çулти уйхир ĕçĕсенче ĕçлеме хатĕрлесси çинчен

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстересси 1943 çулти тĕп задача пулса тăрать тесе шутлаççĕ, çакă вара тракторсене, комбайнсене тата ялхуçалăх машинисене мĕнле хатĕрлесе çитерниччен тата вĕсемпе колхозсен хирĕсенче мĕнле усă кӳрнинчен чылай килет.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ СССР Наркомземне, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, партин обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, МТС-сен директорĕсемпе политотдел начальникĕсене пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе тракторсемпе комбайнсене тата ялхуçалăх машинисене вăхăтра, пысăк пахалăхпа юсассине организацилеме, трактористсен, комбайнерсен, механиксен, трактор бригадисен бригадирĕсен кадрĕсене суйласа илсе хатĕрлеме, МТС-сенче пур тĕрлĕ горючисене те пухса хатĕрлеме, республикăсемпе крайсенче тата облаçсенче вырнаçса тăракан промышленность предприятийĕсем пулăшнипе çĕнĕ запаслă пайсем тăвас тата киввисене юсас ĕçе пурнăçа кĕртсе пыма хушнă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ **çапла йышăннă:**

I. ТРАКТОРСЕНЕ, КОМБАЙНСЕНЕ ТАТА ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕНЕ ЮСАССИ ÇИНЧЕН

1. Облисполкомсен, крайисполкомсен, республикăсенчи совнаркомсен председателĕсене тата парти обкомĕсен, крайкомĕсен, союзлă республикăсенчи Компартисен Центральный Комитечĕсен пĕрремĕш секретарĕсене вĕсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене çуркуннехи уйхир ĕçĕсем валли пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра хатĕрлесе çитерессишĕн хăйсем ответлă пулни çинчен асăрхаттарас.

2. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене 1943 çулхи мартăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр, çар заказĕсене пурнăçа кĕртессине чăрмантармалла мар туса, крайсен, облаçсен тата республикăсен территорийĕнче вырнаçса тăракан промышленность предприятисенчи рабочисенчен 10—20-шер ремонтнăй бригадăсем организацилеме хушас; çав бригадăсене квалификациллĕ слесарьсене, токарьсене, тимĕрçĕсене, электросварщиксене кĕртсе, кашни бригадăна 7—10-шар çынран тумалла, [illegible] бригадир (инженер е техник) [illegible] МТС-сене МТМ-сене [illegible] ямалла.

3. СССР Наркомземне, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, МТС директорĕсене [illegible] те ĕçлеме хатĕрлес ĕçе 1943 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле. Газогенераторлă тракторсене юсас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăма СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместительне Васин юлташа хушас.

4. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас:

а) 1943 çулхи мартăн 15-мĕшчен кашни комбайна мĕнле сыхласа усранине, техника енĕпе мĕнле пăхса усранине тата мĕн юсама кирлине комисси туса тĕрĕслемелле, вăл комиссие МТС директорне, политотдел начальникне, комбайнсен механикне тата çав комбайнпа ĕçлекен комбайнера кĕртмелле;

б) тракторсене юсанипе пĕр вăхăтрах комбайнсене юсас ĕçе организацилемелле, комбайнсене юсанă çĕрте тракторсене юсас тĕлĕшпе ĕçлемен комбайнерсемпе усă курмалла.

5. Облисполкомсен, крайисполкомсен, республикăсен совнаркомĕсен председателĕсене тата парти [illegible]

6. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас:

а) уйхир ĕçĕсене тума хатĕрленес ĕçре кая юлса пыракан кашни МТС тата МТМ ĕçне мартăн 15-мĕшчен уйрăмăн тĕрĕслесе тухса вĕсене пулăшу парас тата вĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнмалла;

б) уйхир ĕçĕсем пуçланиччен МТС-семпе МТМ-сене çуракине вăхăтра хатĕрлес тĕлĕшпе тата тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăх машинисене юсас ĕç мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тата сăнаса тăрас тĕлĕшпе ĕçлеме МТС-семпе МТМ-сем çумне парти обкомĕсен, крайкомĕсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен, çавăн пекех тата облисполкомсен, крайисполкомсен, республика совнаркомĕсен членĕсене тата облаçри, крайри, республикăри ытти ертсе пыракан работниксене уйăрса çирĕплетмелле;

в) пур МТС-сенче те тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăх машинисене мĕнле пахалăхпа юсанине тĕрĕслесе тухмалла тата кашни МТС-рах [illegible]

[illegible] тата МТС-сем çуракине тухма хатĕрленнине тĕрĕслени çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетне отчет тăратмалла.

II. ТРАКТОР БРИГАДИСЕМ ÇИНЧЕН ТАТА ТРАКТОРИСТСЕНЕ ĔÇШĔН ТӲЛЕССИ ÇИНЧЕН

7. Трактор бригадисен ĕçĕнчи обезличкăна пĕтерес тата тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе вĕсен интересне çĕклес шутпа, МТС-сен директорĕсене çапла тума хушас: ялхуçалăх ĕçĕсене туса пыма трактор бригадисене пĕр колхозри е юнашар тăракан темиçе колхозри уйхир бригадисен çĕр участокĕсене пĕр çултан кая мар вăхăтлăх çирĕплетсе памалла. Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен икĕ эрне малтан кашни трактор бригади валли заданисем туса палăртмалла, унта тракторпа мĕнле ĕç, мĕн чухлĕ ĕç тумаллине тата вăл ĕçсене хăш вăхăтра пурнăçа кĕртмеллине кăтартмалла.

8. МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсене çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен 20 кун малтан трактор бригадисене трактористсен çĕнĕ кадрĕсем хушса парса йĕркелеме хушас, çапла вара кашни трактористах хăйĕн тракторне уйхир ĕçĕсем пуçланиччен сахалтан та икĕ эрне малтан тĕплĕн тĕрĕслесе пăхма пултартăр.

9. СССР Наркомземне пĕр трактор çинчех лайăх тата нумай вăхăт хушши ĕçленĕшĕн, трактора тирпейлĕ те юсавлă пăхса усранăшăн ытларах хавхалантармалли майсем çинчен СССР Совнаркомне 10 кун хушшинче проект тăратма хушас.

10. Çапла йĕрке тăвас: трактор çумне кăкарса ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене тата трактор инвентарьне пурне те МТС механикĕ трактор бригадин бригадирне акт тăрăх çулталăк пуçламĕшĕнче парать. Машинăпа инвентарьшĕн, вĕсене техника тĕлĕшĕнчен йĕркеллĕ упрассишĕн трактор бригадин бригадирĕ тракторпăн ответлă пулнă пекех ответлă пулмалла. Ялхуçалăх машинисемпе трактор инвентарьне пĕр бригадăран тепер бригадăна парасси механик е участокри агроном хут çырса ирĕк панă тăрăх кăна пулма пултарать.

11. Тракторсене техника каланă пек пăхса упрассишĕн ответлăха ӳстерес шутпа МТС-ра старши тата сменнăй тракторист должноçне тăвас. Старши тракторист пулма МТС директорĕ чи лайăх трактористсенчен уйăрса лартать. Ана сменнăй тракторист тата прицепщик пăхăнса тăрать.

Çапла йĕрке тăвас: ялхуçалăх ĕçĕсем пуçланас умĕн старши тракторист, трактор бригадин бригадирĕпе пĕрле, старши механикран трактора тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене акт тăрăх йышăнать.

Ялхуçалăх ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăн старши трактористăн трактора хĕлле упрама хатĕрлемелле, трактор бригадин бригадирĕпе пĕрле трактора тата ун çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе орудисене, 1942 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă 1912-мĕш номерлĕ постановленире кăтартнă пек, акт тăрăх старши механика памалла.

Старши трактористăн çаксене тумалла:

а) кашни смена пуçланас умĕн трактора тата кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе орудисене хăйĕн пăхса тухмалла; кирлĕ пулсан тĕп механизмсене хăйĕн йĕркелесе ямалла;

б) тракторсене тата кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе орудисене техника каланă правилăсем тăрăх пăхса усрассине (кашни смена хыççăнхине тата вăхăтран вăхăта пăхассине) йĕркелемелле;

в) горючипе сĕрмелли çусене йышăннă нормăран ытлашши расходлама памалла мар, ĕçлесе тухнă çусене пухса МТС-а парассишĕн ответ тытмалла;

г) сменнăй трактористă хăйĕн ĕç опытне парса тăмалла. Старши тракторист унăн тракторĕпе ĕçленĕ ĕç пахалăхĕшĕн ответ тытать, вăл ĕçсене колхоз йышăннă çĕре хутшăнать.

12. Трактора тата кăкарса ĕçлекен машинăсемпе орудисене лайăх ĕçлеттернĕшĕн старши трактористпа унăн сменщикĕн ĕçне хавхалантарма çапла йĕрке тăвас:

а) хăйсем çумне çирĕплетнĕ тракторпа ĕçлесе икĕ сменăри нормăна тултарнăшăн старши трактористпа унăн сменщикне пĕрер ĕçкунĕ хушса параççĕ;

б) сезонри ĕç нормине тултарнă пулсан, уйри ĕçсем пĕтнĕ хыççăн трактора тата кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе орудисене юсавлă тавăрса панă пулсан, старши трактористпа унăн сменщикне вĕсенчен кашни гарантиллĕ минимум тăрăх илекен çулталăкри ĕç укçи чухлĕ машинно-тракторнăй станци преми тӳлет.

Тракторсемпе машинăсем техника енчен епле тăнине уйрăм комисси тĕрĕслет. Вăл комиссире МТС директорĕ, политотдел начальникĕ, старши механик тăраççĕ. Комисси ĕçне тунă çĕрте тракторпа кăкарса ĕçлемелли машинăсене тавăрса паракан трактор бригадин бригадирĕпе тракторист пулмалла.

СССР Наркомфинне Наркомземăн 1943 çулхи финанс планĕнче старши трактористсемпе вĕсен сменщикĕсене премилеме кирлĕ укçа-тенкĕне уйăрса хăварма хушас.

13. Çурхи уйхир ĕçĕсен срокĕсене кĕскетес тата уйри ĕçсене лайăхрах тăвас тĕлĕшпе трактористсене материальнăй ыйтусем енĕпе интереслентерес шутпа 1943 çулта трактористсене хавхалантарма çакăн пек мерăсем йышăнас:

а) „Универсал" трактор çинче ĕçлекен МТС трактористчĕсем, хăйсен сменинче календарлă малтанхи 15 кунта сухаласа, сӳрелес, культиваци тăвас тата акас тĕлĕшпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 35 гектартан кая мар тăваççĕ пулсан, 20 ĕçкунĕ таран преми илеççĕ. Кунсăр пуçне, МТС трактористчĕ-

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Çак кунсенче Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем тăшманăн Демянск районĕнчи войскисен группине хирĕç наступлени пуçласа янă. Сакăр кун хушши çапăçса, пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 302 пункта, çав шутра **Демянск хулине тата Личково, Залучье** ятлă район центрĕсене, ирĕке кăларнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Февралĕн 28-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем нимĕçсен йышлă укрепленийĕсене тата тĕреклетнĕ пункчĕсене тытса илнĕ. Совет подразделенийĕсем пĕр участокра кăна тăшманăн 26 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, 8 орудине тата вуншар пулеметне пĕтерсе тăкнă. Хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тытса илес тесе, гитлеровецсем контратака тунă, анчах та çав контратакăна пирĕннисем сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли тата персе çĕмĕрнĕ 2 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем тăшманăн контратакисене сирсе тăнă, пĕр пайĕ çапăçса пырса разведка тунă. Пирĕн танковăй тата моторизованнăй подразделенисем нимĕç пехотине пĕр батальон таран пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 5 танкне, боеприпассем тиенĕ 15 автомашинине тата бензин тултарнă 4 автоцистернине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем боеприпассен 2 складне, продовольстви складне, 5 оруди, 8 миномет, 11 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем чĕркуççи таран шывпа пылчăк тăрăх утса пырса, тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ, 7 оруди, 18 пулемет, 5 миномет, боеприпассен 2 складне, 40 лаша тата 19 трактор тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 виллине çити выртса юлнă. Тепĕр участокра нимĕçсен 3 танкне тата 2 бронемашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен пысăк отрячĕ февралĕн 20-мĕшĕнче пĕр вăхăтрах темиçе чугунçул станцине тапăннă. Партизансем нимĕç хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те станцин оборудованине çĕмĕрсе тăкнă. Пĕр чугунçул станцинче депопа вспомогательнăй мастерской сирпĕнтернĕ, 9 паровоза, горючи, апат-çимĕç тата вăрман материалĕсен склачĕсене пĕтерсе тăкнă. Пысăк чугунçул узелĕн электростанцине юрăхсăра кăларнă. Тепĕр станцире партизансем гаража, 5 автомашинăна, 2 телефон станцине, тырă складне тата çар чаçĕн пекарнине пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 3 пулемет, 84 винтовка, 3 пистолет, 1.200 патрон, 40 комплект тумтир тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсемпе хатĕрĕсем тытса илнĕ. 88 гитлеровец партизансене тыткăна парăннă.

* * *

Харьков облаçĕнчи Рогань поселокĕнчен чакса каяс умĕн нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем мирлĕ пурăнакан 16 çынна персе вĕлернĕ. Кунсăр пуçне, фашистла пуçкасакансем 9 совет хĕрарăмне: Марфа Бредипăна (икĕ ачан амăшне), 23 çулхи Мария Маргуле, 24 çулхи Ольга Бельцевăна тата ыттисене те çакса вĕлернĕ.

* * *

Бельги патриочĕсем Шарлеруа районĕнче нимĕçсен çар эшелонне крушени тунă. 20 вагон ытла çĕмĕрĕлнĕ. 100 гитлеровец ытла вилнĕ е аманнă. Антверпенра хĕçпăшаллă бельгиецсен ушкăнĕ нимĕç чаçĕн штабне çĕмĕрсе кĕнĕ те 7 гитлеровеца вĕлернĕ, унтан, секретлă документсене илсе тухса, çав çурта сирпĕнтерсе янă.

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем çинчен Польша правительстви пĕлтерни

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян каçхине Польша правительстви вырăссемпе Польша хушшинчи çыхăну çинчен çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: «Февралĕн 25-мĕшĕнче Польша правительстви генерал Сикорский председатель пулса ертсе пынипе иртнĕ ларура Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем çинчен сӳтсе-явнă та çакăн пек решени йышăннă: «Хальхи вăрçă пуçланиччен те, вăрçă вăхătĕнче те Польша халăхĕ Совет Союзне хирĕç пырас тĕлĕшпе нимĕçсемпе нимĕнле майпа та пĕрлешсе ĕçлеме килĕшмен, тесе Польша правительстви çĕнĕрен çирĕплетсе парать. ССР Союзĕпе çыхăнса тăрас ĕçре Польша вăрçă туса пырас тĕлĕшпе Совет Союзĕпе килĕшсе ĕçлеме тата çĕнтерӳ тунă хыççăн туслă та ырă кӳршĕллĕ çыхăнусене сыхласа хăварма хатĕр тăнине ялан палăртнă. Совет Российи тĕлĕшпе тӳрременех е мĕнле те пулин урăхла майпа тăшманла шухăш тытнă тесе Польшăна айăплакан усал пропагандăна Польша правительстви татăклăн сирсе ярать. Польша республикин чиккисене Днепр патĕнче е Хура тинĕс патĕнче тума шутлани çинчен, е тата Польша хăйĕн чиккисене хĕвелтухăçнелле малалла сарма тăрăшни çинчен каланисем пачах та тивĕççĕр япаласем пулса тăраççĕ.

Пĕрлешнĕ нацисенчен пĕрремĕшĕ пулса хăйне вăйпа туртса кĕнĕ вăрçа вăрçма пуçланă чухнехи чикĕсене шута илсе, Польша правительстви Совет Союзĕпе Польша хушшинче 1941 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче договор тунă вăхăтран пуçласа пĕрмаях çакăн пек позици тытса пынă: Польшăпа Совет Российи хушшинчи чикĕсем çинчен тăракан ыйтура 1939 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пулнă йĕрке сыхланса юлмалла. Кунпа пĕрлех Польша правительстви çапла шутлать: Антлантика хартипе килĕшсе тăракан çак позицие пăсни пĕрлешнĕ нацисен пĕрлĕхне сиен кӳрет. Польша правительстви çапла шутлать: мĕнпур союзниксем пĕр-пĕрипе тачă çыхăнса тата пĕр-пĕрне шанса пурăнни—çĕнтерӳ тума тата яланлăх мир тума кирлĕ фактор пулса тăрать, çавăнпа та Польша правительстви пĕрлешнĕ нацисен пĕрлĕхлĕ фронтне пăсакан е вăйсăрлатакан мĕнпур актсемпе заявленисене питлет».

Кăçалхи февралĕн 25-мĕшĕнче Польша правительстви тунă деклараци пирки ТАСС пĕлтерни

Кăçалхи февралĕн 25-мĕшĕнче Польша правительстви Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусем çинчен Лондонра пичетлесе кăларнă пĕлтерӳ çакна кăтартса парать: Украина тата Белоруссия халăхĕсен хăйсен нациллĕ государствисенче пĕрлешес тĕлĕшри историллĕ прависене Польша правительстви йышăнасшăн мар. Украинăпа Белоруссин тахçан авалхи çĕрĕсене хăйсем хушшинче валеçсе илнĕ империалистла государствăсен захватчикла политикине халĕ те законлă тесе шутласа, украинецсемпе белоруссем хăйсен нациллĕ государствисенче пĕрлешнин пуриншĕн те паллă фактне шута илмесĕр тăрса, Польша правительстви çапла майпа Украинăпа Белорусси çĕрĕсене валеçессишĕн, украинецсемпе белоруссен халăхĕсене уйăрса пайласа пĕтерес политикăна малалла та пурнăçа кĕртсе пырассишĕн тăрать.

Советăн ертсе пыракан ушкăнĕсем çапла шутлаççĕ: Украинăпа Белорусси халăхĕсен хăйсен тăванĕсемпе пĕрлешес правине хирĕç тăни Польша правительствин империалистла шухăшсем пуррине кăтартса парать, Польша правительстви Атлантика хартийĕ пирки калани вара чăнлăхпа нимĕн чухлĕ те килĕшсе тăмасть. Атлантика хартийĕ украинецсемпе белоруссен нациллĕ прависене пăсма никама та ирĕк памасть, пачах урăхла, пур халăхсен нациллĕ прависене те, вăл шутрах Украинăпа Белорусси халăхĕсен прависене те, йышăнас принципа тытса пырать.

Британири паллă министр лорд Керзон та, вăл ССР Союзĕ çине ăшă кăмăлпа пăхмасть пулин те, Польша Украинăпа Белорусси çĕрĕсене ыйтма тивĕç маррине ăнланнă, Польшăн ертсе пыракан ушкăнĕсем вара халиччен те çак ыйтăва ăнланасшăн мар.

Хальхи вăрçă пуçланиччен Польша Совет Союзне хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе Германипе пĕрле ĕçлеме килĕшмен тесе Польшăн ертсе пыракан ушкăнĕсем çирĕплетсе пани чăнлăхпа килĕшсе тăмасть, мĕншĕн тесен Польша правительстви тата унăн министрĕ Бек, Польшăна Совет Союзне хирĕç тăратма тăрăшса, гитлерла Германипе тачăрах çыхăнас фашистла политикăна тытса пынине пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать.

Хальхи вăрçă мĕне те пулин вĕрентет пулсан, вăл вара чи малтан çакна вĕрентет: славян халăхĕсен пĕр-пĕрипе харкашмалла мар, нимĕç пусмăрĕнчен хăтăлас тесе пĕр-пĕрипе туслăн пурăнмалла. Украинăпа Белорусси çĕрĕсене тытса илме шухăшлаççĕ пулсан, çапла вара Польша халăхĕпе Украина тата Белорусси халăхĕсем хушшинче харкашу кăларса яраççĕ пулсан, вара Польшăн ертсе пыракан ушкăнĕсем ниме те вĕренеймен, мĕншĕн тесен Польшăн ертсе пыракан ушкăнĕсен çакăн пек политики чи малтан Польшăна хăйне вăйсăрлатать тата славян халăхĕсен Германи пусмăрçисене хирĕç пыракан кĕрешӳри пĕрлĕхлĕ фронтне çĕмĕрет.

Польша правительствин пĕлтерĕвĕ çакна кăтартса парать: Польшăн хальхи ертсе пыракан ушкăнĕсем çак ыйтупа Польша халăхĕн чăн-чăн шухăшне тытса пымаççĕ. Польша халăхĕн хăйĕн тăван çĕршывне ирĕке кăларассишĕн тата çирĕп те тĕреклĕ Польша туса хурассишĕн пыракан кĕрешӳри интересĕсем—Украинăпа Белоруссири тăванла халăхсемпе. çавăн пекех вырăс халăхĕпе тата ССР Союзĕнчи ытти халăхсемпе те пĕр-пĕрипе туслăн çыхăнса пĕр-пĕрне шанса тăрас ĕçе пур майсемпе те çирĕплетессипе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнтăмăр

КАРАНЪЯЛ, мартăн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховный Главнокомандующийĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар кунĕ ячĕпе панă приказа сӳтсе-явнă хыççăн, пирĕн артелĕн коллективĕ Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕ.

Эпир февральти производство планне 185 процент тултартăмăр. Ăмăртăва хутшăнса, артель коллективĕ майăн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана 60 процент тултарма обязательство илчĕ. Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне эпир çулталăк хушшинче кăлармалли продукцин 32,2 процентне туса кăлартăмăр. Хамăр çине илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн эпир çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр. Артелĕн чи лайăх çыннисем: стахановец Григорьев юлташ ĕç нормине 500 процент, Алексеев юлташ —400 процент, Яковлев, Соколов, Назарова тата Аполлонова юлташсем — 300-шер процент тултарса ĕçлени çакна уççăн çирĕплетсе парать.

И. МОКЕЕВ,

Октябрьски районри «Труд» артель правленин председателĕ

КРОСА 4.951 ÇЫН ХУТШĂННĂ

ÇĔМЕРЛЕ, мартăн 2-мĕшĕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Профсоюзсемпе комсомолăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа ирттернĕ йĕлтĕрлĕ кросне районра пĕтĕмпе 4.961 çын хутшăннă, вĕсенчен 373-шĕ — комсомолецсем. Ăмăртусене хутшăннисенчен 2.793 çын ГТО значокĕн, 1.978 çын БГТО значокĕн нормисене панă.

Йĕлтĕрлĕ кроса уйрăмах комбинатри тата хулари 3-мĕшпе 7-мĕш номерлĕ шкулсен çамрăкĕсем активлăн хутшăннă. Шкул ачисем пурте старта тухнă, вĕсенчен 90 проценчĕ ГТО тата БГТО нормисене панă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн

МТС-сен тракторĕсене, комбайнĕсене тата ялхуçалăх машинисене 1943 çулти уйхир ĕçĕсенче ĕçлеме хатĕрлесси çинчен

ЮЛАШКИ.

сем çав срокрах 35 гектартан ытла ĕç тусан, кашни гектар пуçне пĕрер ĕçкунĕ хушса илеççĕ.

б) СХТЗ трактор çинче ĕçлекен МТС трактористчĕсем, хăйсен сменинче календарлă малтанхи 15 кунта сухалас, сӳрелес, культиваци тăвас тата акас тĕлĕшпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 45 гектартан кая мар тăваççĕ пулсан, 35 ĕçкунĕ таран премии илеççĕ. Кунсăр пуçне, МТС трактористчĕсем çав срокрах 45 гектартан ытла ĕç тусан, кашни гектар пуçне пĕрер ĕçкунĕ хушса илеççĕ.

в) СХТЗ—НАТИ трактор çинче ĕçлекен МТС трактористчĕсем, хăйсен сменинчи календарлă малтанхи 15 кунта сухалас, сӳрелес, культиваци тăвас тата акас тĕлĕшпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 90 гектартан кая мар тăваççĕ пулсан, 40 ĕçкунĕ таран премии илеççĕ. Кунсăр пуçне, МТС трактористчĕсем çав срокрах 90 гектартан ытла тусан, кашни гектар пуçне 0,6 ĕçкунĕ хушса илеççĕ.

г) ЧТЗ трактор çинче ĕçлекен МТС трактористчĕсем, хăйсен сменинче календарлă малтанхи 15 кунта сухалас, сӳрелес, культиваци тăвас тата акас тĕлĕшпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 120 гектартан кая мар тăваççĕ пулсан, 45 ĕçкунĕ таран премии илеççĕ. Кунсăр пуçне, МТС трактористчĕсем çав срокрах 120 гектартан ытла ĕç тусан, кашни гектар пуçне 0,5 ĕçкунĕ хушса илеççĕ.

д) Газогенераторлă СХТЗ—НАТИ трактор çинче ĕçлекен МТС трактористчĕсем, хăйсен сменинче календарлă малтанхи 15 кунта сухалас, сӳрелес, культиваци тăвас тата акас тĕлĕшпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 65 гектартан кая мар тăваççĕ пулсан, 40 ĕçкунĕ таран премии илеççĕ. Кунсăр пуçне, МТС трактористчĕсем çав срокрах 65 гектартан ытла ĕç тусан, кашни гектар пуçне 0,8 ĕçкунĕ хушса илеççĕ.

е) Газогенераторлă ЧТЗ трактор çинче ĕçлекен МТС трактористчĕсем, хăйсен сменинче календарлă малтанхи 15 кунта сухалас, сӳрелес, культиваци тăвас тата акас тĕлĕшпе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 95 гектартан кая мар тăваççĕ пулсан, 45 ĕçкунĕ таран премии илеççĕ. Кунсăр пуçне, МТС трактористчĕсем çав срокрах 95 гектартан ытла ĕç тусан, кашни гектар пуçне 0,6 ĕçкунĕ хушса илеççĕ.

14. ЦК ВКП(б) тата СССР Совнаркомĕ 1939 çулхи январĕн 13-мĕшĕнче «Машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановленире çураки тата культиваци ĕçĕсенче горючи расходламалли нормăна 10 процент таран ӳстермелле тунине 1943 çулхи çурхи суха вăхăтĕнчи малтанхи 6 куна тăсас.

15. МТС-ăн участокри механикĕ хăйĕн çумне çирĕплетнĕ бригадăсемпе палăртнă плана пурнăçа кĕртнĕ пулсан тата трактор ĕçĕсене лайăх пахалăхпа тунă пулсан, ăна натурăллă премии 20 пăт тĕшшырă пама колхозсене сĕнес, çав тырра колхозсем, хăйсен уйхирĕсенче тракторсем мĕн чухлĕ ĕçленине шута илсе, уйăрса хураççĕ.

16. Тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе тата орудисемпе ĕçлеме, трактор бригадисене горючипе шыв турттарма, колхозăн уйри ĕçсем пуçланиччен пĕр уйăх малтан, МТС советĕнче çирĕплетнĕ план тăрăх, çителĕклĕ хатĕрлесе çитернĕ уйрăм çынсене уйăрса хумалла.

Тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе тата орудисемпе ĕçлеме, горючипе шыв турттарма ятарласа уйăрнă колхозниксене МТС директорĕ пĕтĕм ялхуçалăх çулĕн тăрăшĕнче ĕçлеме трактор бригадисем тăрăх уйăрса çирĕплетет. МТС директорĕ килĕшмесĕр колхоз вĕсене çулталăк хушшинче урăх ĕçе куçарма пултараймасть.

Çапла йĕрке тăвас: прицепщиксене, вĕсем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх, вĕсем мĕнле колхоз хирĕнче ĕçленĕ, çав колхозра унти расценкăсем тăрăх натурăпа тата укçан тӳлеççĕ.

17. Тракторсен уйхир бригадисем тунă уйри ĕçсен пахалăхне тĕрĕслесе тăма колхоз пухăвĕсенче пĕрер-икшер колхозникe е колхозницăна уйăрса хума сĕнес.

Çапла йĕрке тăвас: уйхир ĕçĕн пахалăхне тĕрĕслеме уйăрнă колхозниксем хăйсен ĕçĕсене МТС агрономĕсем ертсе пынипе, туса пыраççĕ.

* * *

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ союзлă республикăсенчи нацилĕ компартисен Центральный Комитечĕсене, парти крайкомĕсене, обкомĕсене райкомĕсене, 1943 çулхи мартăн 20-мĕшĕнчен, МТС-сен 1943 çулхи ĕçĕсен итогĕсене сӳтсе-явма хушнă. Çапла вара иртнĕ çулта тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăхĕн сложнăй машинисене юсас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе çитменлĕхсене пĕтерес, МТС ĕçĕсене лайăхлатас енĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Çак постановление МТС-сен производство совещанийĕсенче, МТС-сен трактористсемпе комбайнерсен, рабочисемпе служащисен канашлăвĕсенче сӳтсе-явмалла.

25-шер çурă илессишĕн

КАНАШ. (Хамăр корр.) Çĕн Шуртанри „Малалла" колхоза выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аван туса пыраççĕ. Свинарка Анна Петрова сыснасене юратса пăхать. Вĕсене вăхăтра апат парать, шыв ĕçтерет, уçăлтарма калать. Иртнĕ çулта Анна Петрова 3 ама сыснаран 68 çăвăр илнĕ, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Çавăншăн ăна ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе 9 сысна çури пана.

— Иртнĕ çул пирĕн кашни ама сысна 23-шер çурă турĕ. Пĕлтĕр вĕсене пурне те пăхса ӳстертĕмĕр. Кăçал колхоз умне эпир кашни ама сыснаран 25-шер çăвăр илме тăрăшатпăр, —тет Анна Петрова.

В. Веселов.

Сулпуçăн приказĕ çине ответлесе, ик-виçĕ хут тухăçларах ĕçлер!

КАНАШ, мартăн 2-мĕшĕ (Телефонпа). Вагонсене юсакан завода, промышленноçпа транспортăн ытти предприятийĕсене, промартельсемпе учрежденисене çулпуç Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа панă приказа сӳтсе-яваççĕ. Ĕççынисен нумай çынлă митингĕсемпе пухăвĕсем пысăк çĕкленӳпе иртеççĕ.

Вагонсем юсакан завод коллективĕ Сталин юлташăн приказне ĕç тухăçлăхне ӳстерсе ответлерĕ. Вагонсем тăвакан цехри слесарьсен Быков юлташăн бригади ертсе пыракан бригади ĕç тухăçлăхне кунсерен ӳстерсе пырать. Унăн бригади февралĕн 26-мĕшĕнче нормăна 265 процент тултарнă пулсан, февралĕн 27-мĕшпе 28-мĕшĕнче 300-шер процент, ĕнер—325 процент тултарчĕ.

Быков юлташăн бригадинчен Фадеичев юлташăн бригади те юлмасть. Слесарь-коммунист Демин юлташ кунсерен 2,5—3-шер норма тултарать.

Комсомолецсемпе çамрăксен Антропов юлташ ертсе пыракан фронтовой бригадин членĕсем çак кунсенче кашниех 3—4 çыншăн ĕçлерĕç. Инструментальнăй цехри фрезеровщиксем Кривцов, Гурьянов, Иванов юлташсем, стахановла вахтăна тăрса, ĕç нормине 500 процента çити тултаракан пулчĕç. Кривцов юлташ мартăн 1-мĕшĕнче заданине 521 процент пурнăçларĕ.

Лайăх ĕçлекенсем кашни цехрах нумайăн шутланаççĕ. Галкин, Миронов, Дюжев тата Федин тимĕрçĕсем кулленех нормăна 300—350 процент тултарассине йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

Забинкин юлташăн цехĕнчи палла слесарь Тимофеев, сулпуçăн чĕнĕвĕ çине ответлесе, ĕç нормине 500 процент ытларах тултарса пыма тытăнчĕ. Токарь Носов 5 çынлăх ĕçлет. Çамрăк работницăсем Владимирова 4 çыншăн, электросварщица-комсомолка Капранова — 3 çыншăн ĕçлеççĕ.

Кусса çӳрекен Хĕрлĕ ялава вагонсем тăвакан цехри çамрăксен фронтовой бригади (бригадирĕ Ефимов юлташ) хăй аллинче çирĕп тытса тăрать. Мартăн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕсенче бригада ĕç нормине 350 процент тултарса ĕçлерĕ.

«Авангард» артелĕн коллективĕ (правлени председателĕ А. Васильев юлташ) халиччен пулман çĕкленӳпе ĕçлет. Çĕвĕ çĕлекен цехри работница Емельянова юлташ, митингра тухса каласа, малашне 2—3 çыншăн ĕçлеме пулчĕ, ыттисене те хăй пек ĕçлеме чĕнчĕ.

«Авангард» артелĕн коллективĕ февральти плана 108 процент пурнăçларĕ. Çĕвĕ çĕлекен цех уйăхри плана 30 процент ытларах тултарчĕ. Артель коллективĕ халĕ Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ.

Гр. Михайлов.

Государствăна пурçăн туса парар

Нумаях пулмасть пирĕн республикăри колхозсенче пурçăн хуртне ĕрчетсе пурçăн тăвас ĕç—çĕнĕ, халиччен туман ĕçчĕ. Халĕ чылай колхозсенче пурçăн тăвасси ытти хăнăхнă ĕçсен шутне кĕчĕ. Халăх хуçалăхĕнче тата оборона промышленноçĕнче пурçăн пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Шупашкар районĕнчи „Чембек" колхоз 1941 çулта пурçăн хурчĕсене ĕрчетме вĕрентекен курса пĕр колхозницăна—Ирина Александрова комсомолкăна янă. Шупашкарта кĕске срокла курсра вĕреннĕ хыççăн, Ирина Александрова колхоза 500 грамм грена (пурçăн хурчĕ йăх кăларма тунă çăмарта) илсе таврăннă.

Гренăран хуртсем тухнă. Ирина Александрова вăл хуртсене юман çулçисем çине янă. Касса кĕнĕ юман тураттин çулçисем часах аншанччăр тесе вĕсене шыв тултарнă чӳлмексем çине лартнă. Пурçăн хурчĕсене ĕрчетме уйăрса панă пӳлĕме яланах ăшă, таса тата уçă сывлăшлă тытма тăрăшнă. Çапла хуртсем хăвăрт ӳссе пынă. Вĕсем мĕнпурĕ те юман çулçине çеç çинĕ. Çапла Ирина Александрова тата унпа пĕрле ĕçлекен колхозницăсем 1941 çулта 500 грамм гренăна ĕрчетсе 167 килограмм таса та паха коконсем (хуртсем тунă çинçе пурçăн çип çăмхисем) пуçтарса илнĕ. Хуртсене лайăх пăхнипе вĕсем икĕ хут нумайрах кокон туса панă. Çапла Александрова ертсе пыракан бригада пурçăн нумай тунăшăн 1.326 тенкĕ премии илнĕ. Пурçăн хурчĕсене курма „Чембек" колхоза çывăхри колхозсенчен хĕрарăмсем сахал мар пырса кайнă. Пурçăна кашни колхозрах туса илме май пулнине куçкĕретĕн курнă.

1942 çулта Александрова юлташăн бригади 350 грамм гренăран 160 килограмм кокон туса илнĕ. Çапла пурçăн туса илес плана бригада виçĕ хута яхăн ирттерсе тултарнă. Планран ирттерсе туса илнĕ коконшăн бригадăна 1.465 тенкĕ премии панă. Районри ялхуçалăх выставкинче бригада 500 тенкĕ премии илме тивĕçлĕ пулнă.

Кăçал Александрова юлташăн бригади пурçăн хуртне ĕрчетсе кокон пухса илес плана 300 процентран кая мар тултарассишĕн кĕрешет. Вĕсен паха ĕçне вĕренсе пырса, районри ытти колхозсенче те пурçăн тăвакан хурта ĕрчетес ĕçе анлăн сармалла.

Агроном Н. Кондаков.

Вулав çурчĕ ĕçлемест

ТАВАЙ. Ворошилов ячĕлле тăракан колхоз çумĕнчи вулав çурчĕ халăх хушшинче нимĕнле ĕç те тумасть. Вулав çурчĕн заведующийĕ Е. Иванов хăйне çав ĕçе лартнăранпа нимĕн те туман. Колхозниксене хаçат-журналсем вуласа парас вырăнне вăл хăйĕн юлташĕсене пухса вулав çуртĕнче картла вылять. Вулав çуртне пыракан хаçатсене табак туртма килне пуçтарса каять. Кунсăр пуçне, Иванов ĕçкĕпе иртĕнсе кайнă. Райçутĕç пайĕн çакăн пирки хăйĕн сăмахне каламалла, вулав çуртне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлекен тумалла.

Г. Филиппов.

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕç

ВКП(б) Калинински райкомĕ вăрманта ĕçлекенсем хушшинче пропаганда ĕçне чылай аван туса пырать. Январьпе февраль уйăхĕсенче вăрман ĕçлекен рабочисене Сталин юлташăн приказне тата Чăваш республикинчи колхозниксем патне янă саламлă телеграммине ăнлантарса панă. Кунсăр пуçне рабочисене совет воинĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен вуласа, каласа паратпăр.

Нумаях пулмасть вăрманти рабочисем хушшинче совет воинĕсен чаплă çитĕнĕвĕсем çинчен калаçу ирттертĕмĕр. Çак калаçу хыççăн вăрманта ĕçлекен 65 çулхи рабочи Скворцов (Шĕнерти «1-я мая» колхозран) сăмах тухса каларĕ.

— Чугунçул транспорчĕ вăрçă вăхăтĕнче татах та лайăхрах ĕçлетĕр тесен, пирĕн хамăрăн вăя хĕрхенес пулмасть. Эпĕ ватă, анчах вăрман турттарнă çĕрте çамрăксенчен ӳксе юлас мар тетĕп. Иртнĕ уйăхра куллен 5 кубометр турттарнă пулсан, халь кашни кун 8 кубометртан кая мар турттарма сăмах паратăп. Турттаракансем вăйлă ĕçленĕ май, касакансен татах та вăйлăрах ĕçлемелле. Пире — турттарма вутă ытлăн-çитлĕн пулăр, — терĕ Скворцов юлташ хăйĕн хумханулла сăмахĕнче.

Çак пухура юлашки кунсенче мĕнле ĕçленине пăхса тухнă хыççăн, Алгазинăри «Чăваш Коммуни» колхозран килнĕ бригада япăх ĕçлени курăнчĕ. Колхозниксем бригадир начар ертсе пыни çинчен калаçрĕç. Вара малтанхи бригадира ĕçрен кăларса, вăрман касакан стахановец Прокопьев юлташа бригадир пулса ĕçлеме çирĕплетрĕмĕр.

Прокопьев юлташ ĕçе хастарлăн тытăнчĕ. Ĕçри хăвăртлăхсене ӳстерчĕ. Бригадăри 9 çын халь куллен 25 кубометр вутă касса хатĕрлеççĕ; çакă вăл кулленхи нормăна 130—150 процент тултарни пулать. Прокопьев юлташ хăй те вирлĕн ĕçлет. Вăл лучковăй пăчкăпа ĕçлесе нормăна 200—250 процент тултарать. Нумаях пулмасть ăна ВКП(б) райкомĕ парти членĕн кандидатне илчĕ.

Вăрман ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе мĕнтери аванрах туса пыратăн, ĕçĕн пахалăхĕпе хăвăртлăхĕ çавăн чухлĕ ӳсет. Туçи Мăратри «Клевер» колхозран пынă колхозниксем февраль уйăхĕнче аван ĕçлерĕç. Бригада (бригадирĕ Еремеева юлташ) кулленхи нормăна 100—110 процент тултарса пырать. Ку бригада Çавалкас Мăратри «Çутталла» колхозри бригадăпа ăмăртса ĕçлет.

Лашапа ĕçлекенсем те çак кунсенче аван тĕслĕхсем кăтартма пуçларĕç. Кăкшăм ялсоветĕнчи «Красноармеец» колхоз колхозникĕсем вăрман турттарас плана кашни кун 120 — 130 процент тултараççĕ. Ф. Денисов, Е. Романов колхозниксем куллен 6-шар кубометр вăрман турттарса пыраççĕ. Кун пек тĕслĕхсем темĕн чухлех тупма пулать.

Хĕрлĕ Çар Сталинград, Ростов, Харьков патĕнче тунă çитĕнӳсем вăрманта ĕçлекенсене питех те хавхалантараççĕ. Хĕрлĕ Çар куллен наступлени туса пырса фашистла çăхансене аркатни çинчен рабочисене кулленех каласа пани сая каймасть. Агитациллĕ-массăллă ĕçĕн результачĕсем кулленех ӳссе пыраççĕ. Çапла майпа ĕçлесе, районри колхозниксем февралĕн 16-мĕш кунĕсем тĕлне чугунçул транспорчĕ валли 8.502 кубометр ытла вутă хатĕрлерĕç, 10 пин кубометра яхăн турттарчĕç. Çакăнпа пĕрлех районри колхозниксем васкавлă заказсем тăвакан заводсемпе предприятисем валли те чылай вутă тата материалсем хатĕрленĕ.

Анчах та хăшпĕр колхоз руководителĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем çине çиелтен пăхма хăтланаççĕ. Ку шута Ассакассинчи «Ким» колхоз председательне Аникин юлташа, Малтикасри «Пĕрлешӳ» председательне Федоров юлташа тата Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз председательне Данилов юлташа кĕртмелле. Çак асăннă юлташсем хăйсен ответлăхне сахал туяççĕ. Вĕсем хăйсен колхозникĕсем хушшинче ăнлантарулла ĕçе туса пымаççĕ, колхозниксене хастаррăнрах ĕçлеме мобилизацилемеççĕ.

Хăшпĕр колхозсен çитменлĕхĕсене палăртнă май, Вăрнар вăрманпромхозĕн çитменлĕхĕсем çинчен те каласа хăвармалла. Леспродторг (директорĕ Ефимов) рабочисене продуктсем вăхăтра парса тăрас ĕçе чăрмантарса пырать. Февралĕн малтанхи кунĕсенче вăрманта ĕçлекенсене çăкăрсăр хăварнă. Çавăн пирки вара вăрмантан 64 çын ĕçе пăрахса килĕсене кайнă. Анчах та çакăн пирки Вăрнар вăрманпромхозĕ (директорĕ Сазонов, парторганизаци секретарĕ Алексеев) нимĕнле мера та йышăнман.

Ку çеç те мар-ха. Вăрманпромхоз çамрăк кадрсене пулăшассине те начар организациленĕ.

Пинерти мастерской участокĕн начальникĕ Панкрашев юлташ ответлă ĕçе ертсе пыма пуçлаччен пăчкă хăйранă çĕрте ĕçленĕ. Вăл сахал вĕреннĕ тата унăн ертсе пырас ĕçре опыт та сахал. Апла пулин те вăрманпромхозĕн руководителĕсем ăна пулăшмаççĕ, пулăшма та шутламаççĕ.

Вăхăт иртсех пырать. Транспорт валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе хăвăртлăхсене халичченхинчен те ытларах ӳстермелле. Вăрман ĕçлекенсем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатмалла. Вăра пирĕн ĕçĕн результачĕсем паха пулĕç.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) Калинински райкомĕн секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Нимĕçсем валли Швецире тральщиксем тунине хирĕç протестлени

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Арбетарен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Смолянд округĕн çурçĕр пайĕнче рабочисен конференцийĕ çапла резолюци йышăннă: «Швеци верфĕсенче нимĕçсем валли тральщиксем тунине хирĕç çирĕппĕн протестлетпĕр, мĕншĕн тесен вăл нацистсен çар машинине ӳстерме пулăшать. Çавăн пекех эпир Германи войскисемпе çар хатĕрĕсене Швеци урлă турттарнине хирĕç протестлетпĕр. Çапăçакан нацистла держава умĕнче çав тери упаленни вăл пирĕн нейтралитетшăн пысăк хăрушлăх пулса тăрать, тенĕ.

Стокгольмри «Арен» фирмин заводĕсенчи рабочисен клуб членĕсен çуллен пулса пыракан пухăвĕ Швеци правительстви патне янă протестра çапла каланă: «Нацистла Германи умĕнче час-часах пысăк уступкăсем тунине тӳсме пултараймастпăр. Германи тĕлĕшпе çирĕпрех политика тытма, тепĕр тĕслĕ каласан—Швеци урлă нимĕç войскисене яма чарма тата ытти енчен те нейтралитета çирĕп тытса пыма ыйтатпăр», тенĕ.

ГИТЛЕРЛА ХАÇАТСЕМ «МАКАРТАТАКАН» НИМĔÇСЕНЕ ХĂРАТАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла влаçсен ĕçĕсем çине урлă пăхакан нимĕçсене Германи хаçачĕсем час-часах хăратса çыраççĕ. «Лицонштедтер цейтунг» хаçат «вăрттăн мăкăртатакан тăшман агенчĕсем» çине хытă тапăнать. «Курайманлăхпа пулнă çав çынсене, чир-чĕр çăлкуçĕ пулса тăраканскерсене» хаçат аларан çапма чĕнет. Çав хаçатах «тĕрлĕ хыпар саракансем активланаççĕ» тата «дисциплина халĕ епле вырăн йышăннине пурте ăнланаймаççĕ» тесе çырать.

«Брюсселер цейтунг» хаçат «Геббельс тухса каланă сăмахра мĕншĕнха нимĕн пирки те сăмах паман, горизонтра шуçăм кăвакарни çинчен нимĕн те асăнман» тесе ыйтать. Хаçат ун пирки çапла ăнлантарать: «Вăрçăн хальхи тапхăрĕ вăл пĕрех те лăпкă çанталăкра кăтерпа уçăлма тухни мар. Эпир хумсем çапса путаракан, тăвăл силлекен кимĕ çинче ларатпăр. Çавăн пирки те ĕнтĕ нимĕнле сăмах та паман», тет. Хаçат нимĕçсене лару-тăру йывăррине ăнланса илме чĕнет.

НОРВЕГИРЕ ГЕРМАНИ САЛТАКĔСЕМ ÇАРТАН ТАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Швеципе Норвегин телеграф бюровĕ çапла пĕлтерет: нумаях пулмасть Норвегире тăракан Германи салтакĕсен пĕр ротине ушкăнпа çартан тарма хăтланнăшăн концентрациллĕ лагере хупса лартнă. Юлашки вăхăтра салтаксем хушшинче дисциплина чылай чакнă. Вĕсенчен нумайĕшĕ тӳрремĕнех çапла калаççĕ: Германия вăрçăра поражени тӳсрĕ, теççĕ.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕН АНАÇЛА ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки кунсем хушшинче Югослави партизанĕсем Мостар—Сараево чугунçулĕн районĕнче наступлениллĕ операцисем ăнăçлăн туса ирттернĕ. Партизансен пĕрлешнĕ отрячĕсен группи хаяр çапăçусенче итальянецсен темиçе çĕр салтакĕпе офицерне вĕлернĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ. Трофейăсен шутĕнче 16 танк, 15 оруди, 270 ăшак тата апат-çимĕç тиенĕ 17 вагон пур.

Крагуеват хули районĕнче партизансем Чулич станцине çунтарса янă тата станцири çуртсене пĕтерсе тăкнă.

АНГЛИН 8-МĔШ АРМИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ТРИПОЛИ, мартăн 1-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Англин 8-мĕш армийĕн малти пайĕсем Бен-Гардан, Меденина, Фун-Татауин ятлă çирĕплетнĕ пунктсене тытса илнĕ хыççăн тăшманăн боевой охранени линийĕ патне пырса çитнĕ. Тăшман хирĕç тăмалли темиçе узел туса хунă. Меденинăран 9 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерех ларакан Метамер высотине англичансем тытса илни паха ĕç пулса тăрать. Çав высота çинчен тинĕс хĕрринчен сылтăмалла выртакан тата шалалла Габет патне çитиччен выртакан вырăна курма пулать. Халь Англин 8-мĕш армийĕн тĕп вăйĕсене тата боеприпассемпе апат-çимĕçсене пĕр çĕре пухаççĕ.

Тăшман авиацийĕ хăйĕн ĕçне сахал палăртнине паллă туса хăвармалла, юлашки икĕ эрне хушшинче вăл 8-мĕш армин боевой йĕркисемпе çыхăну линийĕсене тапăнни пулман. Англи транспорчĕсем Мальтăпа Триполи патне çухатусем тӳсмесĕрех çитеççĕ темелле. Нумаях пулмасть 15 караплă пысăк караван Александрийăран Мальта патне, унтан Триполи патне тăшманăн пĕр самолетне тĕл пулмасăрах çитнĕ. Англи летчикĕсем каланă тăрăх, Сицилие çĕрле вĕçсе пырса тапăннă чухне тăшманăн пĕр самолечĕ те сывлăша вĕçсе хăпарман.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ СЕН-НАЗЕРА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çĕр Англи самолечĕсем Сен-Назерти подводнăй лодкăсен бази çине вĕçсе пырса вăйлăн тапăннă. Хĕвеланăç Германин хăшпĕр ытти районĕсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Японецсем Гуанчжоуване оккупациленни

КИТАЙ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВИШИ «ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ» ЯНĂ ПРОТЕСТ

ЧУНЦИН, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 17-мĕшĕнче, Виши «правительствипе» килĕшсе, Япони войскисем Гуандун провинцийĕн кăнтăр пайĕнчи Гуанчжоувань территорине оккупациленĕ; 1899-мĕш çулта ăна Франция тара илнĕ. Çавна пула Китайăн ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви Вишин Чунцинри поверенныйне нота янă. Вăл нотăра çапла каланă: Гуанчжоувань Китай республикин территорийĕ пулса тăрать, 1899-мĕш çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче Гуанчжоуване тара илес тĕлĕшпе Китайпа Франци хушшинче тунă договорăн пĕрремĕш пунктĕнчех вăл Китай территорийĕ шутланнине палăртнă. Çапла вара, тенĕ нотăра, Виши правительстви Китай правительствипе килĕшмесĕр çав концесси виççĕмĕш çĕршыва оккупацилеме е усă кума ирĕк пама пултарайман, пушшех те Китай тăшманĕ пулса тăракан çĕршыва пама пултарайман. Çавăн пирки те, тенĕ нотăра, 1899-мĕш çулта Китайпа Франци хушшинче Гуанчжоуване тара парасси çинчен тунă договор хăйĕн вăйне çухатать. Китай правительстви хăйне çав территорие хăйĕн аллинчех хăварас енĕпе кирлĕ ĕçсем тума ирĕклĕ тесе шутлать, çавăн пекех тата вăл Виши правительствинчен çак майпа пулнă тăкаксене шыраса илмелли правăна хăйĕн аллинчех хăварать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Вăрман сыхлас тата вăрман лартас ĕçĕн управленине Шупашкарта ĕçлеме лесоводсем, бухгалтер-ревизор, бухгалтер-финансист тата склад заведующийĕ кирлĕ, районсенче ĕçлеме лесоводсем тата бухгалтерсем кирлĕ. Работниксене хваттер тата вутă параççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Урицкий ур., 36. Тел. 7—25.
2—1

Чăвашпромстрахкассăна ялан ĕçлеме çакăн пек ĕçлекенсем кирлĕ: ĕç сыхлăхĕпе техника хăрушсăрлăхĕн инспекторĕ, старши оргинспектор, ачасен учрежденийĕсем тăрăх бухгалтер-ревизор тата страховой начисленисен бухгалтер-ревизорĕсем.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Кайбулка шывĕн набережнăйĕ, 21 (Кожупряжь çурчĕ). Тел. 6—79 (икĕ звонок).
2—1.

Чувашшвейпромсоюза финанс пайĕн пуçлăхĕ, экономист-финансист тата бухгалтер-ревизор кирлĕ.
3—1.

Чăваш комбанкне ст. инспектор тата ст. бухгалтер кирлĕ. Ĕçукçине килĕшнĕ тăрăх тӳлеççĕ.
0—09 номерлĕ телефон тăрăх ыйтса пĕлмелле.

Кинофикаци Управленин Шупашкарти отделĕ хулари предприятисемпе учрежденисем валли сасăллă кинокартинăсем тăратма пултарать. Заняти вăхăтĕнче çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамĕ, 21. Телефон № 3—95.

Шоферсен курсне вĕренме февралĕн 15-мĕшĕнчен илеççĕ. Курса 17 çула çитнĕ тата унтан иртнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене (çав шутра 1926-мĕш çулхи январьте, февральте, мартра тата апрельте çуралнисене те), тăватă класран кая мар вĕренсе тухнисене илеççĕ. Вĕренекенсене стипенди параççĕ тата апат (ирхипе кăнтăрлахи апат) çитереççĕ.
Пур ыйтупа та çак адреспа пырса ыйтмалла: Шупашкар, Калинин ур., 51, Кадрсен отделĕ. Ирхине 9 сехетрен пуçласа 17 сехетчен пырса ыйтма пулать.
2—2.

„Металлист" артеле çакăн пек рабочисем кирлĕ: литейщиксем, тимĕрçĕсем, молотобоецсем, жестянщиксем, модельщиксем, сехет мастерĕсем тата çав специальноçсене вĕренекен учениксем.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Кировски поселок, Граждански урам, 3. Тел. 2—45 (икĕ звонок).
2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.